


**«Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕ – 125 çулта**

# Вĕренме условисем çителĕклĕ

Чуманкасси шкулĕ ачасене çирĕп пĕлӳ парас тесе тĕрлĕ çулсем шырать, пурнăç таппипе тан утса пыма тăрăшать. Кунта ачасене вĕренме те, вĕрентекенсене ĕçлеме те пур условисене те туса панă. Паллах, ку Вĕрентӳ министерстви тĕрлĕ проектсенче шкулсем валли тĕрлĕ çăмăллăхсем туса панипе пулса пырать.

Юлашки çулсенче шкулти чылай кабинета çĕнĕ сĕтел-пукан тата компьютер класĕсем килсе çитни савăнтарать. Акă вырăс чĕлхипе литература урокĕсене ачасем кăмăлласах çӳреççĕ, мĕншĕн тесен С.В. Алексеева вĕсене çĕнĕ технологипе усă курса вĕрентсе пырать. Химипе биологи кабинетĕнче те ачасем яланах йышлă. Е.И. Кадыковапа Т.М. Иванова опытсем туса ачасене кăсăклантараççĕ. «Икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс», - тесе калани нихçанхинчен те вырăнлă. Н.Н. Замятина хăйĕн ачисемпе чĕннипех те мухтанма пултарать. Унăн вĕренекенĕсем тĕрлĕ шайри олимпиадăсенче 1, 2 вырăнсене çĕнсе илнĕ. Ачасем хушшинче ют чĕлхесене вĕренес текенсен йышĕ чакмасть.

Çак çĕнĕлĕхсем шкул ятне çӳле çĕклеме майсем туса параççĕ, педколлективва тата хавхаланса ĕçлеме хистеççĕ.Çĕнĕлĕхсем усă кӳни куç умĕнчех.





Виçĕ çул хушшинчи ЕГЭ кăтартăвĕсем ачасен пĕлӳ шайĕ лайăхланса пынине кăтартрĕ. 2008-2009 вĕренӳ çулне тăвата ылтăн, икĕ кĕмĕл медальпе вĕçлеме пултартăмăр.

Юлашки çулсенче вĕренсе тухакансен шутĕнче аслă вĕрентӳ заведенийĕсене вĕренме кĕрекенсен йышĕ ӳссех пырать. Алла аттестат илнисем малалла пĕлӳ пухма республикăн тĕп хулине çул тытаççĕ. Акă пĕлтĕр вĕренсе тухнă ачасенчен 6-шĕ тӳлевсĕр, 5-шĕ тӳлевлĕ мелпе аслă пĕлӳ илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Ăсталăха туптаса çитернĕ ачасем шкултан тухса кайрĕç те ĕнтĕ. Каллех ĕçе çĕнĕрен пикенет хастар вĕрентекен. Тăрăшни сая кайманни çинчен тĕрлĕ предметпа ирттерекен олимпиада çĕнтерӳçисем аса илтерсех тĕраççĕ: Марина Алексеева биологипе, Ольга Степанова историпе, Лариса Цветкова акăлчан чĕлхипе, Анжела Кузьмина химипе, Роман Емельянов физкультурăпа, Алексей Поликарпов астрономипе тата ыттисем те.

Шкул пурнăçĕ наука ĕçĕпе тачă çыхăнса тăрать. Шкулти методика пĕрлешĕвĕн ертӳçисем наукăпа практика конференцийĕсене ачасене йышлăн явăçтарса тăраççĕ. Ытларах О.М. Перлова, В.Н. Николаева, Н.Н. Замятина, Ю.А. Артемьев вĕрентекенсем ачасемпе çыхăнса ĕçлеççĕ.

Паянхи кун шкул коллективĕ хăй умĕнчи тĕллевĕсене пурнăçлама тăрăшать. Ачасен сывлăхне çирĕплетсе, интеллектуаллă аталану парса вĕсене харпăр хăйне аталанма майсем туса парать. Çавăнпа та ачасем хавасланса çӳреççĕ ĕнтĕ Чуманкасси шкулне.

**М. МИТРОФАНОВА,**
**директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

# Шкул музейĕ уçăлать

Кĕçех пирĕн шкул 125 çул тултарать. Çак тапхăрта пирĕн шкул, пирĕн тăрăхри ялсем тĕпрен улшăнса илемленчĕç.1884 çултанпа шкул историйĕ те пуянланса пычĕ.

Çак улшăнусемпе ачасене паллаштарас тесе, вĕсен пĕлĕвне анлăлатас тĕллевпе ашшĕ-амăшĕсен конференцийĕнче шкул музейне йĕркелеме йышăнтăмăр. Музей йĕркелессин тĕллевĕ – материал пухса халăх умне кăларасси, информаци парасси анчах мар, халăх культурипе историне хисеплеме хăнăхтарасси те. Иртнине пĕлмесĕр паянхине пĕлме йывăртарах. Музей вара иртнипе хальхине çыхăнтаракан вырăн пуласса шанатпăр эпир.

Паллах, музей тăвасси вăл пĕр самантра пулакан ĕç мар. Çавăнпа та çуллахи каникулта ачасене пысăк ĕç хушнă: вĕсен авалхи япаласене пухмалла, интереслĕ çынсен биографийĕпе паллашмалла, хамăр тăрăхри историпе çыхăннă вырăнсем çинчен материал шырамалла. Ачасем çак ĕçе активлă хутшăнни пире савăнтарчĕ. Паянхи куна та вĕсем тĕрлĕ материал илсе килсех тăраççĕ. Шкул ачисем хăйсен мăн аслашшĕсемпе асламăшĕсен пурнăçĕпе интересленеççĕ, ялсем пуçланса кайнин историйĕпе кăсăкланаççĕ, пирĕн тăрăхри е пирĕн шкултан вĕренсе тухнă аслă çынсен биографийĕпе тĕплĕн паллашаççĕ, тĕрлĕ документ илсе килеççĕ.

Пухăннă материала музейра кирлĕ пек вырнаçтарасси те çăмăл мар. Çак ĕçе йĕркелесе пыраканĕ – И.А. Перлов.

Музея килекен çын пирĕн патăмăрти колхозсем пуçланса аталанса пыни çинчен, шкул историйĕ, ку тăрăхри ӳсен-тăрансемпе тискер чĕр чунсем çинчен, пирĕн тăрăхри паллă вырăнсем çинчен тĕплĕн паллашма пултарĕ.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, пĕрмай улшăнса тăрать. Çавăнпа та музей йĕркелесси çакăнпа ан вĕçлентĕр, малалла аталансах пытăр.

**Н. ЗАМЯТИНА,**
**акăлчан чĕлхи учителĕ.**

***Декабрĕн 11-мĕшĕнче Чуманкассинчи вăтам шкул хăйĕн 125 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çак савăнăçлă уява шкулта малтан ĕçленĕ учительсене тата кунтан вĕренсе тухнисене, ашшĕ-амăшĕсене, шкула пулăшса пыракансене, шкул пурнăçĕнчен аякра тăманнисене йыхравлатпăр. Уяв шкулти актовăй залра 11 сехетре пуçланать.***

**Шкул администрацийĕ.**

# Ачасен пултарулăхне аталантаратпăр

Çамрăкла вĕренни – чул çинче, ватăлла вĕренни – юр çинче. Ача чух тăрăшса вĕренмеллине пĕлтерет çак ваттисен сăмахĕ. Çамрăксен малашнехи пурнăçĕ ачалла мĕнле пĕлӳ илнинчен килет-çке-ха.

Хальхи вăхăтра ачасене уйрăм предметсемпе кăна тĕрлĕ пĕлӳ пани çителĕксĕр. Юлашки çулсенче общество пурнăçĕнче пулнă улшăнусем çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕç. Харпăр хăй тĕллĕн шухăшлама пултаракан, анлă тавракурăмлă, хăйсене килĕшекен профессие суйласа илме хатĕр çамрăксене кăлармалла паянхи шкулăн. Çакна пурнăçлама шкулсенче майсем пур.

Чуманкасси шкулĕнче паянхи куна 16 кружокпа секци ĕçлет. Вĕсенчен 7-шĕ – шкултисем, 8-шĕ вара районти тĕрлĕ ведомство çумĕнчисем (район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ, çамрăк техниксен станцийĕ, районти ачасен пултарулăх çурчĕ). Кашни кунах ачасем уроксем хыççăн хăйсем юратнă кружок ертӳçисем патне васкаççĕ, вĕсемпе пĕрле хăйсен пултарулăхне туптаççĕ.

Ачасем спорта юратнипех ĕнтĕ унпа çыхăннă секцисем йышлă шкулта. Арçын ачасемпе танах хĕр ачасем те бокс ( тренерĕ О.А. Сютруков), ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен ( тренерĕ В.Н. Данилов) секцисене çӳрени пире савăнтарать. Баскетбол, волейбол, теннис, футбол вăййисен хăйне евĕрлĕхĕсемпе ачасене С.Н. Романов тренер паллаштарать, пулас чемпионсене хатĕрлет. Çитĕнӳсем те сахал мар спорт секцийĕсене çӳрекенсен. Чи кирли вара – ачасен сывлăхĕ çирĕпленни.



Творчествăлла аталанма май паракан кружоксем те сахал мар Чуманкасси шкулĕнче. «Çамрăк дизайнер» ( ертӳçи И.А. Перлов) кружокра ачасем хитре ӳкерме вĕренеççĕ пулсан, техникăлла моделировани, судомоделировани кружокĕсенче ( ертӳçисем А.И. Морозова, И.А. Перлов) арçын ачасем савăнсах карап, машина моделĕсене ăсталаççĕ, пулас профессине техникăпа çыхăнтарма ĕмĕтленеççĕ.

Кăçалтанпа шкулта ташă кружокĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна С.А. Каликов ертсе пырать. Ачасем килĕштереççĕ пултаруллă педагога, унпа пĕрле тĕрлĕ хусканусем тума хăнăхаççĕ, илемлĕ ташă мелĕсене вĕренеççĕ.

Шкулта темиçе çулах ĕнтĕ «Çамрăк журналист» кружок ĕçлет. Ачасем заметкăсем, статьясем çырма вĕреннипе пĕрлех «Жемчужина» хаçат кăларса тăраççĕ. Çитĕнӳсем те çук мар кружока çӳрекенсен. Акă 2009 çулта 11-мĕш класра вĕренекен Оля Павлова республика шайĕнче иртекен çамрăк журналистсен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнма пултарчĕ. Кашни çулах шкул пĕтерекенсем хушшинче журналист профессине суйласа илекенсем пурри пире савăнтарать, малалла ĕçлеме хавхалантарать.

Тăван çĕршыва юратасси, ăна хисеплесси – кашни çын тивĕçĕ. Çакна мĕн ачаранпах хăнăхтарса пымаллипе тимлеççĕ Чуманкасси шкулĕнче. Шкулта Совет Союзĕн Геройĕ Григорий Алексеев ячĕпе хисепленекен çарпа патриотла клуб уçни çак ĕçе анлăрах тума май парать (ертӳçи Ю.А. Артемьев). Клубăн членĕсем – чăн-чăн патриотсем. 2009 çулта районти «Зарницăпа» «Орленок» вăййисенче 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕç каччăсемпе хĕрсем, çĕршыва яланах хӳтĕлеме хатĕр пулнине кăтартса пачĕç.

«Çамрăк краевед» кружока темиçе çулах ĕнтĕ О.М. Перлова ертсе пырать. Кружокăн тĕллевĕ – ачасене тăван çĕре юратма вĕрентесси. Хĕр ачасемпе арçын ачасем проектсем, тĕпчев ĕçĕсем çыраççĕ. 2008 çулта «Муркаш районĕн кăнтăр – хĕвеланăç округĕ тăрăх турмаршрут йĕркелесси» проектпа республикăра 3-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕç çамрăк краеведсем.

Хăйсен пĕрремĕш ĕç укçине Чуманкасси ачисем шкултах илеççĕ. Кашнийĕнех ĕç кĕнеки пур вĕсен. Шкул районти ĕçпе тивĕçтерекен центрпа тачă çыхăнура ĕçленипе çыхăннă çакă. Аслă классенчи каччăсемпе хĕрсенчен йĕркеленнĕ ĕç бригади уроксем хыççăн шкула та, колхоза пулăшма та вăхăт тупать, укçа ĕçлесе илет. Хăйсен тăрăшулăхне кура вĕсем районта та, республикăра та лайăххисен шутĕнче.

Шкулти ĕçсене тĕрĕс, пĕлсе йĕркелени ачасен вĕренес кăмăлне çĕклет, ырă туйăмĕсене вăратать, вĕсен пултарулăхне аталантарать, пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пулăшать. Çаксене шута илсе, малашлăха пăхса ĕçлет те ĕнтĕ паянхи Чуманкасси шкулĕн коллективĕ.

**В. НИКОЛАЕВА,**
**директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

# «Шкула юратăр»

***Иван Димитриевич Вязов – Чуманкасси шкулĕнче чи нумай çул директорта ĕçленĕ, вăлах çĕнĕ шкула хута янă, унтах нумай çĕнĕлĕх тунă. Паян вăл пирĕн ыйтусем çине хуравлама кăмăл турĕ.***

**– Иван Димитриевич, сирĕншĕн чи малтанхи вĕрентекен кам пулнă?**

– Паллах, вăл анне пулнă. Унсăр пуçне хамăн пĕрремĕш учителе – Терентий Трофимович Трофимова – ырă сăмахсемпе аса илетĕп: вăл çирĕп ыйтатчĕ, питĕ хитре почеркпа шăрçаласа çыратчĕ, ачасене хисеплетчĕ.

**– Эсир нумай çул хушши шкул директорĕ пулса ĕçленĕ. Çав çулсем çинчен аса илсен аванччĕ.**

– 1952 çулта мана директора лартрĕç. Ĕçлеме питĕ йывăрччĕ: классем çитместчĕç, шкулăн пур кĕтесĕ те çĕрĕшнĕччĕ, хальхаль авари ан пултăр тесе хăраттăмăр. Ачасене икĕ сменăпа вĕрентеттĕмĕр.

Тулли мар вăтам пĕлӳ паракан шкулта эпĕ çичĕ çул ĕçлерĕм. Çав вăхăтра эпир пилĕк класлăх шкул, ĕç урокĕсем валли мастерской, учительсем валли икĕ хваттер турăмăр, тепĕр хваттере ремонт туса çĕнетрĕмĕр.

1959-мĕш çулта колхозсене пысăклатма пуçларĕç, вĕсен ертӳçисем пулма чи пултаруллă 30 пин коммуниста вĕренме ячĕç. Çав шутра эпĕ те пултăм.

1962-мĕш çулта пирĕн шкул вăтам шкул пулса тăчĕ. 1966-мĕш çулта мана каллех шкул директорне лартрĕç. Паллах, ку питĕ йывăр ĕç пулнине эпĕ питĕ лайăх ăнлантăм: пире çĕнĕ шкул кирлĕ. Мĕнле йывăрлăхпа, мĕнле асаппа ăна тунине каласа та çитерес çук!

Паян калама та питĕ лайăх: 1975-мĕш çулхи сентябрĕн 1-мĕшне эпир çĕнĕ шкулта кĕтсе илтĕмĕр. Ку маншăн питĕ савăнăçлă кун пулчĕ! Кун пек шкул районта та урăх çукчĕ. Тепĕр çул учительсем валли икĕ хваттерлĕ çурт та хута яма пултартăмăр.

1986 çулта эпĕ пенсие кайрăм, краеведени ĕçне пуçăнтăм.

**– Паянхи шкул çинчен эсир мĕн калама пултаратăр?**

– Паянхи шкула кĕме те лайăх: ăшă, хăтлă, кабинетсенче компьютерсем лараççĕ, шкулне газпа ăшăтаççĕ, ачасене тутлă апат çитерме типтерлĕ столовăй пур. Аякри ялсенчи ачасене шкула икĕ автобуспа турттарни – паянхи кун утти. Вăрçă хыççăнхи çулсенче эпир кун пек шкул çинчен ĕмĕтленме те пултарайман.

Хамах аса илетĕп: директор ĕçне шанса парсан, шкулта эпĕ шинельпе çӳреттĕм, унран лайăхрах çи-пуç ман пулман та. Ĕç укçине те эпĕ 800 тенкĕ илеттĕм, вăл укçапа çав вăхăтра пасарта пĕр пăт ыраш çăнăхĕ илме пулатчĕ. Çапах та никам та пуç усса, нăйкăшса ларман, малаллах талпăннă, пуласлăха ĕненнĕ.



**– Эсир нумай интереслĕ кĕнеке кăларма пултартăр. Кĕнеке çырасси сирĕн мĕнрен пуçланнă-ха?**

– Эпĕ «Апаш», «Дорогие имена», «Оринин аваллăхĕ» кĕнекесем çыртăм. Унсăр пуçне Муркаш энциклопедине кăларас ĕçе те хутшăнтăм. Халĕ эпĕ «Апаш салтакĕсем» ятлă кĕнеке кăларма хатĕрленетĕп.

Пуçласса вара район хаçатĕнчи статьясенчен пуçларăм. Манăн яланах лайăх çынсем çинчен, ял историйĕ çинчен çырас килетчĕ. Пĕтĕмпе манăн хамăр район хаçатĕнче пĕр 100 статья пичетленсе тухрĕ. «Эпĕ çырмасан кам çырĕ, эпĕ асăнмасан кам асăнĕ», - теттĕм эпĕ яланах. Çапла вара çырма пуçларăм та, паянхи кун та чарăнаймастăп.

**– Иван Димитриевич! Эсир хăвăр çулсенчен чылай çамрăк курăнатăр, вăр-вар утатăр. Вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши?**

– Çынна хирĕçӳ, кӳренӳ ватăлтарать. Эпĕ курайманлăх мĕнне пĕлместĕп, темле çынпа та пĕр чĕлхе тупма тăрăшатăп, кӳренĕве ăша ямастăп. Хам пурнăçра никама та усал сунман, юратман ача шкулта пулман. Чĕлĕм туртса, эрехпе ашкăнса сывлăха пĕтермен. Пурнăç пĕрре çеç килет, ăна илемлĕ пурăнса ирттермелле.

**– Юбилей ячĕпе пурне те мĕн суннă пулăттăр?**

– Шкул, паллах, ачасем валли. Хисеплĕ ачасем, сирĕн пуласлăх – хăвăр алăра. Шкула юратăр – вăл сире валли нумай тăвать, учительсене итлĕр – вĕсем сире тĕрĕс çул çине тăма, пысăк пĕлӳ пама пĕтĕм вăйран тăрăшаççĕ. Хисеплĕ учительсем! Ăрăвăн пуласлăхĕ – сирĕн алăра. Çирĕп сывлăх, ĕçри çитĕнӳсем сире! Пурне те калас килет: шкул мухтавĕ – ачасенче, вĕсене вĕрентекен учительсенче!

**О. ПЕРЛОВА калаçнă.**